Чăваш енри следовательсем коррупци тĕслĕхĕсемпе пĕлтĕрхи пекех 177 уголовлă ĕç пуçарнă. Чи анлă сарăлнă сăлтавсем те унченхи çулхипе пĕрешкел: взятка илни е пани пуринчен ытла (90 ĕç), должноç полномочийĕсенчен иртни тата службăри ултав (21-шер), служба вырăнĕпе усă курса çаратни (19) ... Кăçал суда янă уголовлă ĕçсенче кăна тăкак калăпăшĕ 7,5 миллион тенкĕ ытла. Çаратнă укçа-тенкĕне тавăрас тĕллевпе следовательсем тăхăр уйăхра 13 миллион енне тенкĕлĕх пурлăх çине арест хунă.

Республикăра коррупцилле преступленисемшĕн суд тенкелĕ çине ларнисем хушшинче вырăнти йĕрке хуралĕн органĕсен харпăр хăй хăрушсăрлăх подразделенийĕсемпе тачă çыхăнура тимлени тупса палăртма май панă. Асăннă ведомствăсен ертÿçисем коррупцие хирĕçле принципиаллă позици йышăнни те пĕлтерĕшлĕ», – пĕлтерет Çĕмĕрлери районсем хушшинчи следстви пайĕ.

**Ирина ЯКОВЛЕВА.**

# Юрă-ташă чуна сиплет

## ХŸТЛĔХ

**Калининăри психикăпа неврологи интернатĕнче сипленекенсен-пурăнакансен тунсăхлама вăхăт çук. Вĕсен пурнăçне кăсăклăрах тăвас, чирчĕрсем çинчен мантарас тесе кунти ĕçченсем чылай тăрăшаççĕ.**




*Фестиваль вăхăтĕнче.*

Тепĕр тесен, спорт, юрă-ташă, алĕçĕ кÿрекен савăк кăмăл-туйăм сывлăха çирĕплетме пулăшни те вăрттăнлăх мар. Хăнасене те тарават кунта. Ахальтен мар республикăри культура, спорт мероприятийĕсене чи çÿллĕ шайра ирттереççĕ. Хăйсем те вĕсенче ялан тенĕ пекех çĕнтерÿçĕсен йышĕнче.

Иртнĕ эрнере те интернатра мĕнпур республикăран хăнасем пухăннă. Хальхинче кунта Чăваш ен Ĕç тата социаллă хÿтлĕх министерстви Инвалидсен кунĕ тĕлне йĕркеленĕ пултарулăх фестивальне йышăннă. Конкурсантсем – ку министерство тытăмĕнчи социаллă тивĕçтерÿ организацийĕсенче пурăнакансем-сипленекенсем. Пĕтĕмпе тăхăр ушкăн хăйсен таланчĕ-пултарулăхне кăтартнă: калининăсемсĕр пуçне Йĕпреçри, Атратьри, Карапай Шăмăршăри, Турханти, тата Шомикри интернатсен, Кÿкеçри ача çурчĕн тата Кÿкеçпе Йÿçкассинчи ватăсемпе инвалидсен çурчĕсен представителĕсем.

Тĕлпулу чăннипех ăшă, кăмăллă лару-тăруна иртнĕ. Унта хутшăнакансене министерство ятĕнчен пай пуçлăхĕ Елена Зайцева саламланă. Калининăри психикăпа неврологи интерначĕн директорĕ Сергей Кузьмин та пурне те пултарулăх ăмăртăвĕнче ăнăçу, чи пĕлтерĕшли – чун-чĕрене савăк кăмăл-туйăмпа çĕклентерме – суннă.

Фестивале хутшăннисем хăйсем тĕрлĕ енлĕ талантлă, çав тери хастар пулнине туллин çирĕплетнĕ. Мĕнле номерсем хатĕрлемен пулĕ: чăваш тата вырăс юррисене янăравлă шăрантарнă, илемлĕ ташăсемпе тата чăн пурнăçри пек сценкăсемпе тĕлĕнтернĕ. Хăйсем шăрçаланă сăвăсене чуна тивмелле вулакансене те, музыка инструменчĕсемпе пултарулла выляканcене те куракансем кăмăлласа йышăннă.

Пултарулăх ушкăнĕсене Чăваш ен Ĕç тата социаллă хÿтлĕх министерствин Тав çырăвĕсемпе чысланă, парнесемпе хавхалантарнă.

**Ирина ЯКОВЛЕВА.**

## СЕМИНАР

# Предпринимательсене пулăшма

**«Пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх, уйрăм предпринимательлĕх пуçарăвĕсене пулăшасси» наци проекчĕн мероприятийĕсен йĕркипе районти предпринимательсем валли «Бизнесри юридици хăрушлăхĕсем» тÿлевсĕр семинар йĕркеленĕ.**

Консультаци пулăшăвне кÿрекенсем – Мускаври «Синергия» финанспа промышленность университечĕн тата «Манăн бизнес» центр специалисчĕсем. Семинарта тĕрлĕрен ыйтусене хускатнă: штрафсене асăрхаттарасси, парăмсемпе тăкаксене шыраса илесси тата ытти пирки. Унсăр пуçне асăрхав органĕсен тĕрĕслевĕсем тата яваплăх пирки те калаçнă, саккуна пăснă анлă тĕл пулакан тĕслĕхсене те тĕплĕн тишкернĕ.

**Хамăр инф.**

# Тĕрĕсленсех тăмалла

## СЫВЛĂХ

**Юлашки çулсенче çĕршывра, вăл шутра хамăр республикăра та, ВИЧ-инфекципе чирлекенсен шучĕ ÿссе пырать.**

ВИЧ иммун тытăмне сиенленине, ăна пĕчĕккĕн аркатнине, çавна май СПИД (синдром приобретенного иммунодефицита) аталаннине пурте пĕлеççĕ. Çынна вăл ар сыхăнăвĕ, юн урлă, чирлĕ амăшĕнчен ачине ерет.

Ку чир ерни тÿрех палăрмасть, клиника палăрăмĕ – вăтамран 5–8 çул е ытларах та. Çавăнпа та çын хăй чирлине вăрах пĕлмесен те пултарать. ВИЧ-инфекцие юна тĕрĕслеттерни кăна палăртать. Ку тĕпчев тÿлевсĕр, анализа вăрттăн та пама юрать.

ВИЧ-инфекци – сывалайми чир. Препаратсем вируса тĕппипе пĕтермеççĕ, вăл аталанассине чăраççĕ çеç. Вируссене хирĕç чирлĕ çыннăн ĕмĕрĕпе сиплenме тивет.

Ку чире асăрхаттарас тесен сывă пурнăç йĕркине пăхăнмалла, ăнсăртран ар сыхăнăвне кĕме юрамасть, наркотиксене нихăçан та тутанса пăхмалла мар.

ВИЧ-инфекцирен юн анализне Вăрнар район тĕп больницин процедура пÿлĕмĕнче илеççĕ. Хумхантаракан ыйтусемпе СПИД-а асăрхаттаракан тата унпа кĕрешекен республикăри центра çитме те (Шупашкар, Ленин урамĕ, 32-мĕш «а» çурт), шăнкăравласа пĕлме те (8-8352-202086, 62-41-04, 62-41-10) пулать.

**Надежда НИКОЛАЕВА, врач-инфекционист.**